Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 62 (4631) | *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 30-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

## *Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ*

Майăн 29-мĕшĕнче районпа хула администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен тата агропромышленность комплексĕн хăш-пĕр предприятийĕсен ертӳçисем хутшăннипе ĕçлĕ канашлу ирттерчĕ.

Ака ĕçĕсене тишкерсе тухса, вăл хресченсен хуçалăхĕсен Хафизов ячĕпе хисепленекен, Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсен, Элметпе Ялавăр зонисен хуçалăхĕсен çĕр ĕçченĕсен тăрăшуллă та йĕркеллĕ ĕçне палăртрĕ, çаплах кăçалхи ака конвейерĕнче технологие пăснине тата ака пахалăхĕ начар пулни çинчен те каларĕ.

Юлашки результат чылай ĕçе ăнăçлă пурнăçласан кăна лайăх пулнине аса илтерсе, Ф.С.Сибагатуллин хирсене удобренисемпе апатлантарас ĕçе активлатас тĕлĕшпе çирĕп задача палăртрĕ. Акнă анасене тымартанах апатлантарни тата "Агрохимсервис" специалисчĕсем акнă анасене химилле хӳтĕлес тĕлĕшпе мерăсем йышăнни - çаксем пурте тухăç пулнинче палăрĕç. Ӳсентăрансем халь вăй илеççĕ, çавăнпа та ку ĕçе пысăк яваплăх туйса пурнăçламалла, тесе палăртрĕ вăл.

Çаплах, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен ертӳçисене таса çĕртме анисем хатĕрлемелли çинчен асăнтарчĕ, ку кивелнĕ курăксемлĕ лаптăксене июнĕн 15-мĕшĕччен сухаласа, техникăна, тĕпрен илсен, тракторсене юсаса пĕтермелли çинчен каларĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлемелли ыйтусене вара çитес çывăх вăхăтра иртмелли зонăри канашлусенче сӳтсе явма палăртрĕ.

...Çак ĕçлĕ калаçу вĕçленнĕ хыççăн Ф.С.Сибагатуллин тӳрех хуçалăхсене тухса кайрĕ.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

## *АКАТУЯ ХАТĔРЛЕНЕТПĔР*

Янкăр уяр тӳпе, тĕрлĕ тĕслĕ ялавсем, мотоциклсен кортежĕ, ĕçре маллата пыракансене чыслани, куракансен хаваслă сассисем, ярмăрккăри хăнасене тараватлăн кĕтсе илекен пĕчĕк хула, юрă-кĕвĕ - халăх юратакан Акатуйри йăлана кĕнĕ çак палăрăмсем кама паллă мар-ха?

Çуллен ирттерекен уява йĕркелессинче пысăк вăй хума тӳр килет. Майăн 28-мĕшĕнче иртнĕ канашлура шăп кăна çакăн çинчен сăмах пынă. Канашлăва хулари предприятисемпе организацисен тата учреждenисен ертӳçисем хутшăннă. Администраци пуçлăхĕн çумĕсем Н.Х.Абдуллинпа Н.Б. Мулюков тата районпа хула администрацийĕн аппарачĕн ертӳçи Ф.Р.Ногуманова çак питĕ пысăк мероприятие ирттерме хатĕрлес тĕлĕшпе тĕплĕ планланă программа тăратнă. Майдан туса илемлетесси, эстрада вырнаçтармалли вырăн, трибуна тата çаплах спорт снарячĕсем хатĕрлеме "халап хулине" тăвасси, çутăпа, суту-илӳпе тивĕçтересси, культура-илĕртӳллĕ программа - çаксене пурне те тата ытти ыйтусене çитес çывăх икĕ эрне хушшинче татса памалла. Районти уява ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе ĕç комиссийĕн председателĕ пулма администраци пуçлăхĕн çумне Р.Г.Билялова çирĕплетнĕ. Тахçантанпах кĕтекен, авалхи тата яланах çамрăк, хирти çурхи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн ирттерекен çак Акатуй вара район тата хула ертӳçисен решенийĕпе июнĕн 13-мĕшĕнче, шăматкун пулать. Тепĕр кун вара районти ялсенче уявлĕç.



*Ӳкерчĕкре - хресченсен хуçалăхĕсен "Родина" ассоциацийĕн шоферĕ Анатолий Тихонович Васильев. Вăл машинăпа çирĕм çул ытла ĕçлет ĕнтĕ, хуçалăхăн шанчăклă кадрĕ шутланать. Ăна тĕрлĕ нарядсем пурнăçлама тӳр килет, акнă вăхăтра вăл вăрлăх турттарать. Хăйĕн ятарласа оборудованиленĕ ГАЗ-53 машинипе Анатолий Тихонович агрегатсене вăрлăхсемпе тивĕçтернĕ.*

*Н.Азизов сăнӳкерĕкĕ.*

## Тухăç-98 пресс-центр пĕлтерет

Ака ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн çĕр ĕçченĕсемшĕн тата тепĕр яваплă - акнă анасене пăхмалли тапхăр çитрĕ, ку ĕçе те питĕ пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ĕнерхи кун тĕлне районта çурхи культурăсем шăтса тухиччен пилĕк пин гектар çинче сӳреленĕ, виççĕ пин гектар çинче вара калчасем шăтнă хыççăн çакăн пек агромероприятисем пурнăçланă. Çав вăхăтрах, çанталăк типĕ те ăшă тăнипе ӳсентăрансене сăтăр тăвакан хурт-кăпшанкăсенчен , çумкурăкран хӳтĕлессине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча" ассоциацийĕнче, "Агрохимсервис" АО, сахăр завочĕн, РСУн хушма хуçалăхĕсенче, "Заря", "Рассвет", "Тĕрнеç" ассоциацисенче пĕрремĕшне пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк", "Киклĕ", "Рассвет", "Сĕнче", "Родина" ассоциацийĕсенче тата "Агрохимсервис" АО, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕсенче çумкурăксемпе начар мар кĕрешеççĕ. Районта 4,5 пин гектар çинче халь сăтăрçăсенчен, икĕ пин гектар çинче вара çумкурăксенчен хӳтĕлемелли мероприятисем ирттереççĕ. Хуçалăхсене "Агрохимсервисăн" ятарлă отрячĕ мĕнпур ял хуçалăх ĕçĕсене пурнăçлама пулăшать, çавăнпа та вырăнсенче хăш хирте мĕнле ĕç тумаллине палăртмалла тата агрохимиксене ĕçпе тивĕçтересси çинчен те маларахах тăрăшмалла.

Хăш-пĕр хуçалăхсенче сĕт пахалăхĕн кăтартăвĕсем те пĕчĕк шайра, тĕрĕсрех каласан, унăн çулăхĕ чакнă. Çакă выльăхсене тулли рационпа апатлантарассине çителĕклĕ тимлĕх уйăрманнипе, концентрациленĕ апатсем çитменнипе пулнă. Тĕслĕхрен, хресченсен хуçалăхĕсен "Ӑ̇ан", "Комбайн" ассоциацийĕсенчен, "Агрохимсервиспа" нефтебазăн хушма хуçалăхĕсенчен юлашки кун илсе килнĕ сĕтĕн çулăхĕ 3,2-3,3 процент çеç шутланнă. Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Заря" тата ытти хуçалăхсенчен илсе килнĕ сĕтĕн çулăхĕ те базислине çитмест. Ку хуçалăх кассине кĕрекен укçана çухатнин пĕр сăлтавĕ пулсан, тепри хăш-пĕр хуçалăхсенчен таса мар сĕт килни. Сĕтçу фермисенче тата çуллахи лагерьсенче ирттернĕ тĕрĕслев хăшпĕр хуçалăхсенче ку объектсенче йĕркесĕрлĕх хуçаланнине, санитари правилисене пăхăнманнине кăтартнă. Сăвакан аппаратсене кирлĕ пек пуçтарман, хăш-пĕр чухне вĕсем йĕркеллĕ ĕçлеменни те пулкалать, çавăнпа ĕнесен çиллисем пăсăлаççĕ, апла пулсан, сĕт пахалăхĕ те начарланать. Çавăнпа та юлашки кунсенче РСУ, "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕсенчен тата "Черемшан" ассоциацирен илсе килнĕ сĕт хăйĕн бактериологиллĕ кăтартăвĕсемпе виççĕмĕш сорт требованийĕсемпе кăна килĕшсе тăнă. Çапла майпа, çак виçĕ хуçалăх пĕр кунра кăна 2368 тенкĕ çухатнă.

### *Калăпăшĕ чакни çеç мар...*

Çакăн пек тĕслĕхсем вара тата та илсе кăтартма пулать. Çакна тĕпе хурса, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕ хăш-пĕр хуçалăхсен ертӳçисене сĕт суса илессинчи пысăк çитменлĕхсемшĕн, продукци пахалăхне кирлĕ пек контроллеменшĕн асăрхаттарчĕ тата ыттисене те, çав шутра хăш-пĕр службăсен ертӳçисене, сĕт пахалăхĕшĕн яваплисене ку отрасле пысăк тимлĕх уйăрмаллине, çамрăк выльăхсен шутне ӳстерес тата сыхласа хăварас ыйтăва та çирĕп контроллесе тăмаллине палăртрĕ.

## Республика хыпарĕ

### *Савăнăçлă тĕлпулу*

Хусанти патшалăх музейĕнче И.Я.Яковлев юбилейĕ ячĕпе выставка уçăлнă. Хăнасене музейăн тĕп директорĕ, филологи наукисен кандидачĕ, тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Геннадий Муханов, президент аппаратĕнчен Аркадий Фокин, чăвашсен обществăпа культура автономи правленийĕн председателĕн ĕçĕсене вăхăтлăха туса пыракан Леонид Серебряков, правлени членĕ Василий Дедушкин кĕтсе илнĕ. Тутарстанри пуçлăхсем Иван Яковлевич ятне хисеплесе музейре ятарлă пӳлĕм уйăрнă.

** Кӳршĕ Чăваш Енре*

## Никольский çăлтăрĕ XXI ĕмĕрте ялкăшĕ

**Муркаш тăрăхĕ нумаях пулмасть кунти Купăрля ялĕнче çуралса ӳснĕ чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, паллă ученăй тата "Хыпар" хаçат никĕслевçи Николай Васильевич Никольский çуралнăранпа 120 çул çитнине халалланă уявсен тĕп мероприятийĕсене ирттернĕ.**

Никольский юбилейне паллă тума Ильич ячĕллĕ хуçалăха /Купăрля шăпах унта кĕрет/ Муркаш район администрацийĕн ертӳçисем, Чăваш гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăсчахĕсем, "Хыпар" хаçатăн представителĕсем, Николай Васильевич тăванĕсем, ял халăхĕ, кӳршĕри хуçалăхсен представителĕсем йышлăн пухăннă.

Уяв Купăрля ялĕнче, Никольские асăнса лартнă палăк умĕнче пуçланнă. Пухăннисем Никольский палăкĕ патне чĕрĕ чечексем хунă, унăн сăваплă та пархатарлă ĕçне сума сунине палăртса пуç тайнă. Кунтах кĕске митинг пулса иртнĕ. Ăна Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Иванов уçнă, "Хыпар" хаçатăн тĕп редакторне А.Леонтьева сăмах панă.

- Ӳтӳ Хусанта пулсан та, чуну санăн тăван вырăнтах, палăртнă хăйĕн сăмахĕнче А.Леонтьев.

- Никольский ятне асăнман тапхăрсем иртсе кайрĕç. Халĕ ун пирки уççăнах калаçатпăр. Çичĕ çул каялла вăл 92 çул каярах никĕсленнĕ "Хыпар" ятне тавăртăмăр.

Алексей Петрович "Хыпар" хаçатăн историйĕпе кĕскен паллаштарнă, çав тапхăрта вăл хăйĕн ятне темиçе хут та улăштарни, анчах хăйĕн малтанхи ятне çав-çавах тавăрнине, Н.Никольский хаçат никĕслевçи çеç мар, питĕ пысăк ученăй, тĕпчевçĕ, тăван халăхĕшĕн ырми-канми тăрăшнă çын пулнине те палăртса хăварнă.

- Эпир кăçал чăваш халăхĕн икĕ улăпĕн - Иван Яковлевпа Николай Никольскин 150 тата 120 çулхи юбилейĕсене паллă тăватпăр, - тенĕ митингра тухса каланă сăмахра ЧР культура министрĕн çумĕ Н.Сахаров. - Иккĕшĕ те вĕсем тăван халăхшăн питĕ пысăк ĕç тунă, ырă ята тивĕçнĕ. Пирĕн те вĕсене асра тытмалла. Сирĕн умра пуç таятпăр, хисеплĕ Николай Васильевич.

Чăваш наци конгресĕн Аслă Пухăвĕн председателĕ В.Станьял, Никольскин чăваш халăхĕн историйĕнчи вырăнĕ пирки каланă май, унăн ятне халиччен асăнманни, илтмĕш-курмăш пулни, юлашки çулсенче çеç ун пирки калаçма пуçлани, çапах та Николай Васильевич ячĕ XX1 ĕмĕрте чăннипех те хăватлăн ялкăшма пуçлассине çирĕп шанни пирки палăртнă. Ку тĕлĕшпе вара хальхи ăрусен тăрăшмалла, çав шутра Муркаш районĕн пултаруллă çыннисен те. Митингра çавăн пекех Чăваш гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕ, истори наукисен кандидачĕ Г.Матвеев, Никольскин тăванĕсем тухса калаçнă. Ун хыççăн кунта пухăннисене аслă профессор тăванĕ Н.Пантелеймонов Никольскисен çурчĕ ларнă вырăнпа паллаштарса çӳренĕ.

# Июнĕн 1-мĕшĕ - Пĕтĕм .тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли кун



*“Арслан 11 çулта. Вулама та, çырма та пĕлмест, никампа та калаçмасть, ăна нимĕн те кăсăклантармасть... Мартăн 8-мĕшĕ çитнĕ май уйрăмах вăйлă тунсăхларĕ, хăйĕн амăшне кĕтрĕ... Темиçе кунран амăшĕ килсен, арçын ача питĕ савăннине пытараймарĕ. Амăшĕ ăна темиçе кунлăха яла илсе каяссине пĕлсен эпир яланхи пекех апат-çимĕç пакечĕ пуçтарса патăмăр. Анчах каçпа 9 сехетсенелле вăл макăрса интерната таврăнчĕ. Киле пырсан амăшĕ пĕрле пурăнакан арçыннипе унăн пакетне туртса илнĕ те ăна хĕнесе кăларса янă...”*

# Шăпа пӳрнисем

Ку йĕркесене воспитательсен, Нурлатри шкул-интернатра виçĕ çул каярах уçăлнă тăлăхсен ушкăнĕнче ĕçлекенскерсен, сăнав дневникĕнчен илнĕ.

Ку ушкăнра 12 ача. Вĕсем тĕрлĕ çулта: 8тан тытăнса 16 çити. Вĕсене социаллă тăлăхсем теççĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем пур, анчах хăйсен ачисене пăрахнипе вĕсенчен ашшĕ-амăшĕн прависене туртса илнĕ. Ушкăна уçни виçĕ çул çитнĕ. Кунта виçĕ çемьерен çеç пĕрер ача, виçĕ ачаллисем вара час-часах тĕл пулаççĕ. Кулаковсен çемйинче 9, 11 çулхи икĕ хĕрача тата пĕчĕк шăллĕ. Интеллектпа вĕсем ытти ачасенчен пĕр пусăм çӳлерех тăраççĕ - активлă, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Иртнĕ çул вĕсенчен пĕри президент елкинче те пулнă. Амăшĕ вара вĕсене пачах та маннă пулĕ: вăл кунта виçĕ çул килсе курман. Килте вара унпа пĕрле тепĕр пĕчĕк ача асапланать. Ăна интерната илмеççĕ, пĕчĕккĕ-ха, ача çурчĕсенче вĕсем валли вырăн çук. Амăшĕ тата пиллĕкмĕш ача кĕтет теççĕ.

Хомутовсен çемйинче те пилĕк ача ӳсет. Иккĕшĕ эрех ĕçме юратакан амăшĕпе пĕрле выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ. Вăл интерната сайра-хутра пыркалать, анчах та ачисене илсе каяс тесе калаçмасть.

Портновсем ушкăнта палăрса тăраççĕ. Çулталăк каярах вĕсене, тискер кайăк чĕпписем пек усалскерсене, Чистайри ача çуртĕнчен илсе килнĕ. Çак аларан кайнă ачасене курсан кунта тĕлĕнсех кайнă: вĕсем вулама та, çырма та пĕлмен, анчах та вăйлă вăрçнă, сăлтавсăрах аллисене хута яма пултарнă, чи тĕлĕнмелли вара вĕсен хушшинче нимĕнле тăванлăх туйăмĕ те пулманни. Халь вара вĕсен чĕрисем пăртак ăшăннă, обществăра хăйсене тыткаламалли хăш-пĕр правилăсене вĕреннĕ. Ку пилĕк ачана та çут тĕнче тăрăх салатнă: пĕри Чистайра, тепри амăшĕпе, интернатрисене вара амăшĕ пĕрре те килсе курман. Чи асли, Лена кăçал 16 çул тултарать. Интернат хыççăн ăçта кайма шутлатăн тесе ыйтсан, вăл Кушка, штукатур-маляра вĕренме каятăп терĕ. Апла пулсан, педагогсем ку ыйтăва та тĕп тимлĕхре тытĕç.

Интернатри пурнăç çирĕп режим тăрăх пырать. Ачасем ĕçлеме юратаççĕ, тĕрĕсрех каласан, кунти педагогсем вĕсене ĕçе вĕрентме тăрăшаççĕ: садра кăмăлпах чаваççĕ, çумлаççĕ, хуçалăхри тĕрлĕ ĕçсене пурнăçлаççĕ.



Пушă вăхăтра хăшĕпĕрисем ачасемпе çамрăксен центрĕн кружокĕсене çӳреççĕ.

Шăпа телее пĕр пек пайламасть çав: хăшĕпĕри çуралсанах чухăн та мĕскĕн пурнăç урапи çине лекет. Акă çак ушкăнри ачасенчен чылайăшĕ - кунта вĕреннисен иккĕмĕш ăрăвĕ. Анчах паян никама кирлĕ мар çак ачасен хытнă чунĕсене ăшă сăмахпа, хурлăхлă самантсенче ачашласа йăпатма хатĕр çынсем пурри ăплантарать. Паллах, чунра йывăр чух камăн та пулин алăкĕ уçă пулмаллах ĕнтĕ. Шăп вĕсем - шкул-интернатри учительсемпе воспитательсем кунти ачасен тĕп тĕрекĕ тата пулăшаканĕсем пулса тăраççĕ. Ушкăнри тĕп воспитатель Мадина Ибрагимовна Хайруллина вĕсемшĕн ашшĕ те, амăшĕ те. Тата икĕ воспитательница пур - Л.М.Соколовапа Э.Р.Гарифуллина. Вĕсем çак ачасене пурлăх тата мораль енчен пулăшнине шутласа тухма та, виçсе пĕтерме те çук. Вĕсем кашни ачан пурнăçĕ çинчен çырса пынă тирпейлĕ дневникĕсене, сăнавĕсене лăпкă та куççульсĕр вулама çук. Анчах воспитательсем ачасене пулăшма мĕнле тăрăшсан та, вĕсен малашнехи пурнăçĕ савăнăç кӳмесси пĕлсе тăраççĕ. Вĕсенчен кашнин хăрушă диагноз: олигофрени - ашшĕ-амăшĕ эрех ĕçессипе иртĕхнин результачĕ е ăсталăн енчен кая юлни, психика функцийĕсем пăсăлни - алкоголизм ачана тĕвĕленнĕ чухнех сиен кӳнĕ.

Тăлăх ачасен ушкăнĕн тата пĕтĕмĕшле интернатăн пурнăçĕ çăмăлах мар. Интернатра килти пек лару-тăру тума май çук, тăлăхсен ушкăнĕн уйрăм кĕтес те çук, тутар чĕлхин пӳлĕмĕ ( унта уроксем тăваççĕ, кĕпе-йĕм улăштараççĕ) кăнтăрла хыççăн çеç пушанать. 12 ачан кулленхи тата “уяв” тумĕсем виçĕ алăклă кивĕ шифоньера вырнаçаççĕ. Çав пӳлĕмре канаççĕ те, унта кĕтесре администраци пуçлăхĕ парнеленĕ телевизор тăрать. Финанслассин ыйтăвне хускатсан, ушкăн пĕр тан пĕрлехи “хуранран” усă курать. Интернатсемпе ачасен çурчĕсене пурлăх енчен пулăшу парасси хăшпĕр çĕрте йăлана кĕни çинчен эпир телевизорпа куратпăр, радиопа илтетпĕр. Мĕншĕн-ха пирĕн ун пекки çук,- тĕлĕнет шкул директорĕ В.Е.Ефимов.

Апла пулин те, тĕнче ырă çынсемсĕр мар. Çапла, ГАИ пурлăх енчен пулăшнипе пуканесен театрне курма пултарнă. Нефтьпе газ кăларакан “Нурлатнефть” управлени интернатри ачасем валли çулсерен Çĕнĕ çул парнисем хатĕрлет. Кăçал вĕсем 172 пулнă. Хăшпĕр вăтă çынсем интерната пулăшас тĕллевпе 50-100-шер тенкĕ параççĕ, анчах та ку питĕ сахал вĕт. Ку укçапа ручкăсем, тетрадьсем туянаççĕ. “127-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колоннăри пирĕн шефсем - пире пулăшмаççĕ”, - тет директор. Кĕскен каласан, интернатра пулăшасса кĕтмеççĕ, ытларах хăйсем пулăшаççĕ. Районта ăмăртусем ирттерсен, хăнасем килсен, вĕсене интерната вырнаçтараççĕ, ку вара сиен кăна кӳрет.

Çак заметка пичетленнĕ хыççăн çăмăл мар тата телейсĕр шăпаллă ачасене пулăшас туйăм çуралĕ. Çавăн пек çуралнăшăн ачасем айăплă мар вĕт. Чăнах та, директор çумĕн Альфия Харисовна Абдуллинан сăмахĕсемпе пирĕн патра чикĕ леш енчи пек мар, чирлĕ ачасене усрама илмеççĕ. Анчах та тĕнчере ырă çынсем пĕтмен çав-ха. Ачасем пĕчĕккĕ кăна кучченеçшĕн те савăнаççĕ, çав самантра вĕсен сăн-пичĕсем савăнăçлă кулăпа çиçнĕ вăхăтра вара сывлăхлă аттепе аннене пурри чăн-чăн телей пулнин хакне тепĕр хут туятăн.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

**Ăнланмалла сăлтавпа ачасен ячĕсемпе хушамачĕсене улăштарнă.**

**Юлашки шăнкăрав уявĕ**

# Ан тив, мĕнпур ырри тата илемли сирĕн çулăра çутаттăр!



Шкултан вĕренсе тухакансене кăçал эпир йывăр та кăткăс вăхăтра ăсататпăр. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкултан 60 ача вĕренсе тухать. Вĕсенчен иккĕшĕ ылтăн медаль, тăваттăшĕ - кĕмĕл медаль илессишĕн тăрăшаççĕ. Республикăра географипе иртнĕ олимпиадăра пĕрремĕш вырăн йышăннă Николай Кончевăн аллинче Хусанти патшалăх университечĕн географи факультечĕн студенчĕ пулса тăнине çирĕплетекен сертификат пур. Паян, юлашки шăнкăрав кунĕ, вĕсем пурте пăшăрханнуллă та савăнăçлă, çав вăхăтрах вĕсене шкулта вĕреннĕ çулсем питĕ хăвăрт иртсе кайни те тĕлĕнтерет, учительсем тата пĕр класра вĕреннĕ юлташĕсем театрализациленĕ сценка кăтартнине сăнаççĕ. Халапри персонажсем Патша хĕрĕ Акăш (М.А.Лукьянова), Хоттабыч старик (Н.П.Васильев), чикан хĕрарăмĕ (И.В.Литта) шкултан вĕренсе тухакансене халал сăмахĕсем калама килнĕ: “Тăрăшсан, хăть мĕнле профессипе ĕçлесен те хăвăра кăтартма пултарăр”. Хăйсен аслă юлташĕсене ăсатма пĕрремĕш класра вĕренекенсем - гномсем те килнĕччĕ, вĕсем экзаменсене ăнăçлă тытма сунчĕç. Сцена çине вунпĕрмĕш класра вĕренекенсем çĕкленчĕç, çак уява ертсе пыракансем шкултан вĕренсе тухакансен совечĕ йышăннипе учительсене асăнмалăх адрессем парасси çинчен пĕлтерчĕç, вĕсене мĕнпур наукăсен Магистрĕ пачĕ.

Шкултан вĕренсе тухакансем шкул çулĕсене аса илчĕç, унта тĕп вырăн Учитель йышăнать. Кунта пуçтарăннă учительсене пурне те çăкăр-тăвар пачĕç. Ашшĕ-амăшĕсен ятĕнчен Зоя Филипповна Кончева тухса калаçса, учительсене ачасене пĕлӳ панăшăн тав турĕ. Шкултан вĕренсе тухакансем шкула фотоаппарат парнелерĕç.

...Акă уявăн чи чаплă саманчĕ - шкул гимне темиçе сасăпа юрлаççĕ. Ку вăл мĕнпур ăру символĕ пек, мĕншĕн тесен пирĕн шкулти учительсенчен нумайăшĕ çак шкултан вĕренсе тухнă вĕт. Уяв вĕçленнĕ чухне шкултан вĕренсе тухакансенчен кашнине нихăçан манăçăнми шкул çулĕсем çинчен музыка кассеттине тата шкул визиткине пачĕç.

Кăçал шкултан вĕренсе тухакансем, футбол командин членĕсем - А.Членов, С.Синяков, С.Прохоров, С.Гаврилов, И.Муртазин, Ж.Фомичев, С.Бурнаевская (йĕлтĕр), Л.Антонова (чупакан) шкулти спорт çитĕнĕвĕсен летописĕн страницине кĕнĕ, вĕсене пурне те асăнмалăх парнесем пачĕç. Юлашкинчен çапла калас килет: шкултан вĕренсе тухакансем, эсир пирĕн мăнкăмăллăх тата мăнаçлăх, ан тив, мĕнпур ырри тата илемли сирĕн çулăра çутаттăр!

**А.ЩЕРБАКОВА,**
**3-мĕш номерлĕ шкул директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

# 35 çул иртнĕ хыççăнхи тĕлпулу

Май уйăхĕн хĕвеллĕ кунĕсенчен пĕринче Кульбаево-Марасари вăтам шкулта çак шкултан 35 çул каярах вĕренсе тухнисем тĕл пулчĕç. Çуллă çынсем хăйсене ачасем пекех тыткаларĕç, пĕр-пĕрне ыталарĕç, иртнине шӳтлесе тата кулса аса илчĕç. Вилнисене те асăнмасăр хăвармарĕç. Вĕсем шкулпа паллашрĕç, унта хальхи вăхăтри меллĕхсем пурришĕн, çаплах малтанхи пекех вăл вĕренекенсене тарăн пĕлӳ памалли тĕп центр пулса тăнишĕн савăнчĕç.

## Майăн 31-мĕшĕ - Пĕтĕм тĕнчери пирус туртма пăрахмалли кун



# Атя, пĕрер туртса ярар-и?

- Çук! - хуравлĕ хăйсен сывлăхне хаклама пĕлекен çĕр, пин çын. Майăн 31-мĕшне календарь тăрăх пирус туртман кун тесе палăртаççĕ.

Эпир пирус туртнин сиенĕ çинчен каласа çĕнĕлĕх уçмастпăр ĕнтĕ. Статистика кăтартăвĕсене пăхсанах пурте паллă. Табакра наркăмăшлă веществосем: углерод окисĕ, никотин, катрак пур. Никотинпа кокаинпа морфий пекех усă курма тытăнсан пирус туртас туйăм ытларах та ытларах илĕртет, малтан нерв системин ĕçне хускатать, кайран вара тертлентерет. Катрак - канцероген, унпа усă курни рак чирне ярать.

Кашни çул тĕнчере туртнине пула чирленĕ 3 миллион çын вилет. Çынсем вилнин сăлтавĕсем хушшинче пирус туртни виççĕмĕш вырăн йышăнать. Ракпа чирленин 85 процентĕ, бронхитпа вăрах чирленин 75 проценчĕ, чĕре чирĕн 25 проценчĕ туртнипе пулать.

Анчах та тĕнчери 120 çĕршывра табак туса кăлараççĕ. Пирус туртакансем пĕр çулталăкра 100 миллион доллар тăкаклаççĕ. Çак укçапа пилĕк триллион сигарет пачки туянаççĕ, "Марльборо", "Кент", "Петр 1" туртма юратакансем хушшинче пирĕн хулара пурăнакансем те.

**<u>Е., инженер.</u>** Хăнăхсан пирус туртмасăр пурăнма пултараяс çук пекех туйăнать. Кăмăл начар пулсан та ала хăех сигарет пачки патне тăсăлать, юлташсемпе тĕл пулсан та мăкăрлантаратпăр. Сывлăхшăн сиенлĕ пулнине хам та ăнланатăп, анчах та пăрахма пултараймастăп. Манăн ывăл ÿсет, эпĕ ăна çак усал хăнăху патне туртăнмалла мар воспитани парас тетĕп.

**<u>Р., вĕренекен.</u>** Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухнех пируспа иртĕхме тытăнтăм. Килтисем кун çинчен пĕлсен хытă ятларĕç, чарас терĕç. Анчах вĕсем вăрçнăçем вăйлăрах туртас килетчĕ. Мĕн ара, пирус туртни арçынна хитрелетет çеç! Манăн атте те туртать - вилмен вĕт. Пирĕн 10-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче ман пек "стажлисем" чылай. Пĕрле пуçтарăнса мăкăрлантарса ярсан калаçма та хаваслăрах. Шкула каймасăр тухсанах туртса яратпăр, уроксем пĕтсен татах. Учительсем пуçĕсене çеç сулкалаççĕ. Пирус туртни преступлени туни мар вĕт!

**<u>Г., хĕрарăм.</u>** Пирĕн патра çеç пирус туртакан хĕрарăмсене юратмаççĕ. Ют çĕршыв фильмĕсенче, тĕслĕхрен, çамрăк хĕрсем туртнине, вĕсем çине никам та хăяккăн пăхманнине, туртса яма сĕннине те кăтартаççĕ. Ман шутпа пирус туртнине начар йăла пек пăхмалла мар, вăл кашнин хăйĕн ĕçĕ. Туртни уйрăмах хĕрарăм организмĕшĕн сиенлĕ тесе çирĕплетекенсем тĕрĕс те пулĕ. Ача çуратма шухăш тытсан эпĕ те пирус туртма пăрахма шутлатăп. Халлĕхе вара туртатăп.

***<u>Редакцирен.</u> Кашнин хăйĕн кăмăлĕ ĕнтĕ. Анчах та юлашкинчен пĕр цифра илсе кăтартасшăн. Шутланă тăрăх, малашнехи 40 çулта пирус туртнипе вилнĕ çынсен шучĕ 10 миллиона çитĕ.***

***Эсир вĕсен хушшине ан лекĕр.***

## 01 служба пĕлтерет



Типĕ те çиллĕ çанталăк тăнине пула республикăра пушарсем тухассипе хăрушă лару-тăру кăткăсланчĕ. Кăçалхи майăн 18-мĕшĕнчен тытăнса 28-мĕшĕччен çеç 260 ытла пушар регистрациленĕ. Çак уйăхра пирĕн районта та 20 ытла пушар пулнă. Вутра тăватшар тата ытларах та хуралтăсем çунса кайни пăшăрхантарать. Çавна май Нурлатри пушар чаçĕ ДПО мĕнпур подразделенийĕсене, милицин участоксенчи инспекторĕсене, организацисемпе предприятисен, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен, вырăнти самоуправленин Совечĕсен ертÿçисене пушартан сыхланмалли режима çирĕп пăхăнассине контроллессине вăйлатма сĕнет. Çуртйĕр çывăхĕнче тата улăх-вăрмансенче кăвайт чĕртме юрамасть. Шăратса çыпăçтармалли мĕнпур ĕçсене пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнса пурнăçламалла.

Объектсене хураллассине вăйлатмалла, ялсенче граждансем пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăннине патруллессине йĕркелемелле, çав шутра ДПО шыв запасĕпе тивĕçтерессине, çыхăну хатĕрĕсемпе комплектлассине, кĕскен каласан, вырăнсенче ирĕклĕ пушар обществин подразделенийĕсен пушарпа кĕрешме хатĕрленнин шайне тĕрĕслемелле.

**И.КУРАМШИН,**
**Нурлатри ПЧ начальникĕ, шалти служба майорĕ.**

## Курăк çăнăхне вут-кăвартан сыхламалла

Юлашки çулсенче районти хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕхе тата кайăк-кĕшĕке апатлантарма витаминлă курăк çăнăхĕпе анлă усă курма тытăнчĕç, ăна АВМ-0,65 тата АВМ-1,5 агрегатсемпе авăртаççĕ.

Çак апата ĕçлесе хатĕрленĕ чухне пушар тухнин сăлтавĕ, ялан тенĕ пекех, типĕтмелли температура режимне пăснипе, çунса пĕтмелли камерăна ытлашши топливо панипе, армана виçесĕр курăк янипе масса ытлашши хĕрсе кайни, çаплах курăк çăнăхĕ хăй хыпса илни пулса тăрать.

Михĕсене тултарнă çăнăха хатĕрленĕ хыççăн 48 сехет хушши тăрăллă лупас айĕнче тытмалла, унтан вара вăрахчен упрама купалама юрать. Складра шанчăклă вентиляци пулмалла. Михĕсене икĕ метртан çÿлĕ мар тата рете икшер михĕ хурса купаламалла. Çăнăх хăй хыпса ан илтĕр тесе температурăна тăтăшах сăнаса тăмалла. Электрооборудовани вут-кăвартан сыхланмалли правилăсемпе килĕшсе тăма тивĕçлĕ.

**Р.ИЛЬЯЛОВ,**
**ИГПН инспекторĕ.**

# Çак çынна паллама пулăшăр!

**Сирĕн умăрта, хисеплĕ вулакансем, малтанхи пурнăçне маннă хĕрарăмăн сăнÿкерчĕкĕ. Хальхи те унăн шанчăксăр, пĕтĕмпех çынсенчен килет. Унăн малтанхи пурнăçĕ çинчен юмăç пăхмăпăр: вăл паян никамăн та тикĕс пымасть. Çак хĕрарăмăн вара хушамачĕ те, ячĕ те, çуралнă çулĕ тата вырăнĕ, ăçта пурăнни ... пĕрре пăхма 54 çулччен, паллă пулнă пулĕ, халь вара çак чĕлхесĕр-хăлхасăр çыннăн пурăнмалли вырăн çеç пур, ăна унта апатлантараççĕ, пăхаççĕ. Тĕрĕс, сăмах Чулпанти ватăсен çуртĕ çинчен пырать. Чулпан ял Совечĕ панă справка унăн пĕртен-пĕр документ шутланать, ăна ним улăштармасăр**



**çырса пĕлтеретпĕр: "Справкăна 1994 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче Нурлат хулинчен РОВД ĕçченĕсем Чулпанти участок больницине илсе пынă чĕлхесĕр-хăлхасăр гражданкăна панă..." Анчах çак справка тăрăх ăна пурăнмалăх укçа шутласа параймаççĕ вĕт.**

**...Акă виçĕ çул ытла ĕнтĕ вăл унта пурăнать, çапах та ăна никам та шырамасть. Нивушлĕ унăн тăванĕсем çук, тен, вăл камăн та пулин арăмĕ, амăшĕ е хĕрĕ?**

**Тинкеререх пăхăр-ха çак сăн-пите: тен, вăл çĕр-çĕр, пин-пин паллана çыннăра аса илтерĕ.**

**Паллăр ăна, çынсем, хăйĕн иртнĕ пурнăçне аса илме пулăшăр!**

**Сирĕн пĕлтерĕвĕрсене çак телефонсемпе йышăнĕç:**

**2-21-11, 2-21-18 (социаллă хÿтлĕх пайĕ), 2-15-63, 2-14-16 (редакци).**

**Д.ТЯМАЕВА.**

# Пĕлтерÿсем

**Ача-пăчасен искусство шкулĕ 1998-99 вĕренÿ çулне çак уйрăмсене вĕренекенсем пухать:**

**Фортепьяно - пурĕ 8-12 çын.**

**Халăх инструменчĕсен класĕсене: баян, аккордеон, домра, тăмра.**

**Вĕрсе каламалли инструментсен класĕсене: труба, гобой, кларнет, флейта, саксофон.**

**Виолончель.**

**Хореографи (ташă).**

**Художество.**

**Июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 5-мĕшĕччен 9 сехетрен тытăнса 12 сехетчен консультаци пулать. Вĕренме кĕмелли экзаменсем июнĕн 8-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре пуçланаççĕ (пĕр кун кăна).**

* * *

**Циолковский урамĕнчи тĕплĕ юсанă икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать (1-мĕш хутра). Телефон: 5-12-35, 17.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Димитров урамĕнчи 18-мĕш номерлĕ кивĕ çурт сутăнать. Телефон: 3-12-56.**

* * *

**Пахчаçăсен "Мечта" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Телефон: 2-19-04.**

* * *

**8х11 метрлă пура материалсемпе пĕрле васкавлă сутăнать. Телефон: 2-12-75.**

* * *

**Çурçĕр-хĕвелтухăç микрорайонĕнче çурт тумалли çĕр участокĕ сутатпăр, никĕс блокĕсем те пур. Телефон: 5-20-13.**

* * *

**УАЗ-31512 сутатпăр, 27 пин километр çÿренĕ. Çирĕклĕ ялĕнчи И.И.Шайхиевран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 3-82-75.**

* * *

**1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21213 "Нива" сутăнать. Школьная урамĕнчи 26-мĕш номерлĕ çуртри 16-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле. 2-17-01 номерлĕ телефонпа 16 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.**

* * *

**В.П.Гордеев ячĕпе панă документсемлĕ сумка тупакана Козлов урамĕнчи 11-мĕш номерлĕ çуртри 5-мĕш хваттере пырса пама ыйтатăп, парне пулать.**

* * *

**76 мм диаметрлă цинкланă пăрăхсем тата 50х50 угольниксем сутатпăр. Ĕç вăхăтĕнче 5-37-91 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Çырчаллăри икĕ пÿлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пекех хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Школьная урамĕ, 33-36, телефон: 2-21-23 (ĕçри).**

* * *

**Хула варринче икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 2-14-63.**

* * *

**УАЗ-452, çуна çинчи гараж, тимĕр хапха, УАЗ валли мостсем, "Дружба" пăчкă, 220 в. электростанци сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 2-26-28.**

* * *

**4-мĕш номерлĕ шкул Наталья Николаевна Леонтьева ячĕпе панă 694661 номерлĕ çухалнă аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**Лачака ялĕнче çурт сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-20-64.**

* * *

**Çĕнĕ Амзяри вăтам шкул Рафис Акрамович Минапов ячĕпе панă Б 548280 номерлĕ çухалнă аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**Çĕнĕ "Урал" мотоцикл васкавлă сутатпăр. Телефон: 2-16-06.**

* * *

**"Рено" микроавтобус сутатпăр, 1,3 тонна тиев, пассажирсем турттарма пултарать, дизель, 1987 çулта туса кăларнă, тĕрлĕ майсем пулма пултараççĕ. Телефон: 2-21-75.**

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. Заказ № 2094